Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи çу уйăхĕн 5-мĕшĕнчепе тухать

9 (7970) № ✻ Шăмат кун, 2012 çулхи нарăс (февраль) уйăхĕн 4-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

## Удостоверенисем илчĕç



***Районти социаллă хӳтлĕх пайĕнчен пĕлтернĕ тăрăх пирĕн районта «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят илме 800 çынна яхăн заявлени панă. Халĕ тивĕçлисене çак ята парас ĕç тытăннă ĕнтĕ. Ветерансен черетлĕ ушкăнне (45 çын, вĕсен спискĕ хаçатăн паянхи номерĕнче пичетленет) февралĕн 3-мĕшĕнче район администрацийĕнче савăнăçлă лару-тăрура райадминистраци пуçлăхĕ Р. Тимофеев «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕн» удостоверенийĕсене пачĕ, хастар ĕçшĕн тав сăмахĕ каларĕ.***

***Сăн ӳкерчĕкре: район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев, удостоверение тивĕçнисенчен пĕри Анаткассинчи Ю. Толстов тата ветерансен районти канашĕн председателĕ М. Виноградова.***

**В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

Тĕл пулу

## М. Игнатьевпа Д. Медведев тĕл пулнă

Эконом класлă çурт-йĕр тăвасси Раççей регионĕсемшĕн чи пĕлтерĕшлĕ задача пулса тăмалла. Çакна пирки пĕлтернĕ Дмитрий Медведев.

Президент Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа ĕçлĕ тĕл пулу ирттернĕ. Калаçу ытларах ЖКХ проблемисем пирки пулнă. Дмитрий Медведев çанталăк сивĕ тăнă май ку сферăри лару-тăру мĕнле пулнипе интересленнĕ. Игнатьев ăнлантарса панă тăрăх лару-тăру йĕркеллех, анчах та çуртсенче пурăнакансем ертсе пыракан компанисем тĕлĕшпе кăмăлсăр пулнин тĕслĕхĕсем çук мар. Çăхавсем пулнă компанисен ĕçнехĕлне право сыхлав органĕсем тĕрĕсленĕ, финанс тĕлĕшпе пысăк çитменлĕхсем тупса палăртнă.

«Енчен те вĕсем хăйсене тивĕçсĕр тытаççĕ пулсан, хупас пулать. Хăшĕсем йĕркене кĕртме пултараççĕ – вĕсене кун пек шанăç памалла. Тĕрĕссипе вара касса çыхăнусăрлăхĕ туса хуни, укçана уйăккинелле «вĕçтерни» вăл – пысăк йĕркесĕрлĕх», – палăртнă Президент. «Ас тăватăр-и, эпир укçа-тенкĕне тӳрех хăй счечĕ çине куçарассин ыйтăвне сӳтсе явнăччĕ. ЖКХ тӳлевĕсем енĕпе сирĕн патра ăна пурнăçа кĕртнĕ-и?» – интересленнĕ Президент.

Михаил Игнатьев ăнлантарса панă тăрăх ку енĕпе пĕрремĕш утăмсем тунă ĕнтĕ. Пĕрлехи касса расчечĕн центрĕсем туса хунă, вĕсем урлă укçа-тенкĕ тӳрех тĕп компанисене çитет. Нимĕнле посредник та çук. Кун пек схема уçăмлă та ансат. Унăн лайăх енĕсем палăраççĕ ĕнтĕ.

Республикăра

## Патшалăх Думин депутачĕсем килнĕ

Республикăра РФ Патшалăх Думин культура комитечĕн ертӳçи Станислав Говорухин тата экономика политикин комитечĕн ертӳçи Игорь Руденский пулнă. Вĕсем Чăваш Ен Пуçлăхĕпе Михаил Игнатьевпа тĕл пулнă.

Паллă кинорежиссер РФ Президенчĕн кандидачĕн Владимир Путинăн суйлав штабне ертсе пырать.

Патшалăх Думин депутачĕсем вырăнти депутатсемпе, интеллигенци ĕçченĕсемпе курнăçнă. Вĕсем çавăн пекех Шупашкарти предприятисене çитсе курнă.

## Пĕр шухăшлисене Интернет пĕрлештерет

Владимир Путин премьер-министр политикине ырлакан ентешсем «Чувашия – за Путина!» сайт ĕçе кĕртнĕ. Вăл çак адреспа вырнаçнă: http://чувашия-за-путина.рф/

Сайтра премьер-министр программипе паллашма пулать. Раççейре юлашки вунă çулта пулса иртнĕ улшăнусем пирки фильмсем пур. Кунтах унăн ĕçне хакласа уйрăм çынсем çырнă статьясене вырнаçтарнă. «Изменим Россию вместе!» рубрикăра кашниех Владимир Путина наказ пама пултарать. «МЫ за Путина» рубрикăра унăн политикине ырлакансем хăйсен сăн ӳкерчĕкĕсене лартма пултараççĕ. Сайтра Владимир Путин статйисене те, пичетре вĕсене сӳтсе явнисене те вырнаçтарнă. Премьер-министра халаллана сăвăсемпе юрăсем те пур кунта. Республикăри «халăх штабĕн» членĕсемпе те паллашма пулать. Унтах В. Путинăн общественнăй йышăну пӳлĕмĕн адресĕпе телефонĕ те пур.

## Пĕтĕмлетӳ куçа уçать

Канашлу

Иртнĕ кĕçнерни кун, нарăс уйăхĕн 2-мĕшĕнче, район администрацийĕн ларусем ирттермелли пӳлĕмĕнче пĕрлешӳллĕ хуçалăхсемпе хресчен (фермер) хуçалăхĕсен ертӳçисемпе ирттернĕ пĕтĕмлетӳ канашлăвĕ хуçалăхсенче алăкран шаккакан отчетлă пухусем умĕн иртнин хăйĕн пĕлтерĕшĕ те пур. Кашнийĕнех паянхи лару-тăрăва лайăх пĕлсе тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тумалла.

– Çĕннине тăтăш вĕренмеллине, ыранхи куна пăхса ĕçлемеллине, иртнине тĕрĕс пĕтĕмлетсе малашлăхшăн тăрăшмаллине пирĕнтен пурнăç ыйтать. Çакна эпир хамăр çинче туятпăр, – терĕ анлă канашлăва пуçарса район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев.

Ял хуçалăх сулĕнчи ĕçсене пĕтĕмлетсе район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ, ял хуçалăх пайĕн ертӳçи В. Калинин анлă доклад туса пачĕ.

Канашлу хускатнă ыйтусемпе хаçатăн малашнехи кăларăмĕсенче паллаштарăпăр.

**А. БЕЛОВ.**

"Раççей йĕлтĕр йĕрĕ – 2012"

## йыхравлать

Çитес вырсарни кун, февралĕн 12-мĕшĕнче, пирĕн районта та, çĕр-шывăн ытти субъекчĕсенчи пекех, "Раççей йĕлтĕр йĕрĕ – 2012" чупу иртет.

Муркашра масстарта тивĕçлĕ шайра ирттерес тĕллевпе кĕçнерни кун йĕркелӳ комитечĕ пухăнчĕ. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев ертсе пынă лару ăмăртура кăтартусем пулмалла маррине кăтартса пачĕ. «Раççей йĕлтĕр йĕрĕ – 2012» чупăва ирттерме палăртнă ответлă ĕçченсем пурте хăйсен ĕçне тивĕçлипе пурнăçлассине пĕлтерчĕç.

Чупăва яланхи пекех вĕрентӳ учрежденийĕсен, ял тăрăхĕсен, ял хуçалăх производство кооперативĕсен, предприятисемпе организацисен командисем хутшăнаççĕ. Ертӳçĕсен VIP-чупăвне ирттерессине те палăртнă. Йĕлтĕрпе чупса ăмăртма 40-рен тата 50-ран иртнĕ ветерансен уйрăм старчĕсем те пулаççĕ.

Çак чупупа пĕрлех ырă йăлана кĕнĕ тăрăх йĕлтĕрçĕсем Социализмла Ĕç Геройĕ Е. Андреев парнисене çĕнсе илессишĕн те ăмăртаççĕ. Ăмăртусене савăнăçлă лару-тăрура йĕлтĕр базинче 10.30 сехетре уçаççĕ.

Ăмăртусен положенийĕпе тĕпленрех 6-мĕш страницăра паллашма пултаратăр.

**Н. НИКОЛАЕВА.**

Саламлатпăр



Йӳçкасси ял тăрăхне кĕрекен Анатри Панкли ялĕнче пурăнакан тата Муркашри сыхăну уйрăмĕнче 33 çул почтальонкăра ырă ятпа вăй хуракан хисеплĕ те тарават, кирек хăçан та пулăшма хатĕр, яланах юратнă мăшăра, аннене, кукамая, хунямана, тăхлачăна, сывăх тăванăмăра – **Маргарита Якимовна НИКОЛАЕВĂНА** 55 çул тултарнă ятпа саламлатпăр. Эсĕ юнашар пулнишĕн эпир савăнатпăр. Малашне татах телейлĕрех, хăтлăрах та канлĕрех пурăнма хăвна та, çемйӳне те çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр, тату пурнăç сунатпăр.

**Салампа: мăшăрĕ, хĕрĕсемпе ывăлĕсем, кĕрĕвĕсем, мăнукĕсем, шăллĕсемпе йăмăкĕ, хăтисемпе тăхлачисем.**



Чи хаклă çыннăмăра, савнă мăшăра, юратнă аттене, ывăлăма, ырă кăмăллă кукаçие – Муркаш ялĕнче пурăнакан **Геннадий Петрович ФАДЕЕВА** сумлă юбилей ячĕпе чун-чĕререн тухакан чи ăшă та çепĕç сăмахсемпе саламлатпăр. Çирĕп сывлăх, çăл куç пек тапакан вăй-хал, телей сунатпăр. Эсĕ пирĕншĕн – ырă тĕслĕх. Эпир сана пурте юрататпăр, хисеплетпĕр.

**Саламлакансем: амăшĕ, мăшăрĕ, хĕрĕпе ывăлĕ, кинĕ, кĕрӳшĕ, мăнукĕ, çывăх тăванĕсем.**



Хаклăран та хаклă çыннăмăрсене – Кашмаш ялĕнче пурăнакан **Леонид Петрович АЛЖИРОВА** 80 çулхи юбилей ячĕпе тата **Валентина Михайловнăпа** иккĕшне çемье çавăрса 55 çул пурнăç çулĕпе пĕрле утнă май чĕререн тухакан ăшă сăмахсемпе саламлатпăр, тав тăватпăр.

Тавах сире пире кун-çул парнелесе пурнăç çулĕ çине тăратнăшăн. Татах нумай пурăнăр, эпир сире юрататпăр, эсир пур чухне эпир телейлĕ.

**Салампа: ывăлĕсемпе кинĕсем, хĕрĕсемпе кĕрĕвĕ, 18 мăнукĕ, 8 кĕçĕн мăнукĕ.**

## Сыхланакана Турă та сыхлать

Сивĕ çанталăк

***Юлашки вăхăтра çанталăк уйрăмах сивĕ тăрать. Кун пек чухне шăнса пăсăлас хăрушлăх та пысăк, чрезвычайлă лару-тăру та пулма пултарать. Çавăнпа та район администрацийĕн гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру енĕпе ĕçлекен пайĕн пуçлăхĕпе Николай Панфилович МИЛЮТИНПА тĕл пулнă май кун пек çанталăкра хамăра мĕнле тытмалли, мĕн çине ытларах тимлĕх уйăрмалли пирки, аварипе çăлав службисен ĕçне-хĕлне çак тапхăрта епле йĕркелесе пыни пирки тĕплĕнрех каласа пама ыйтрăм.***

– Çапла, çанталăк ăшăтма шутламасть. Каçсерен вырăн-вырăн температура 30 е ытларах градус сивĕне те çитет. Климат нормин виçинчен ку вăл 7–12 градус сивĕрех. Каласа хăвармалла, сивĕпе шăнса кайнипе çынна больницăна леçме тивнĕ тĕслĕх те çук мар. Çавăнпа та пурин те асăрханулăх, тимлĕх пирки манма юрамасть.

Районти аварипе çăлав службисем халĕ çирĕп режимпа ĕçлеççĕ. Пысăк инкек-синкек таврашĕ пулман. Сиксе тухнă вак-тĕвек пăтăрмахсене вăхăтра татса пама тăрăшатпăр.

Манмалла мар: сывлăш температури уйрăмах чакса кайнă чухне электролинисем татăлса кайнипе е пысăк нагрузкăна пула чрезвычайлă лару-тăру сиксе тухма пултарать. Ăшăпа тивĕçтерессинче пăтăрмахсем пулма пултараççĕ. Çуртсене вутăпа хутса ăшăтакансен уйрăмах тимлĕ пулни кирлĕ. Çуртсенчи газ оборудованийĕсем юрăхсăра тухас хăрушлăх та пур.

Çынсене çак правилăсене тепĕр хут аса илтерни ытлашши пулас çук. Шăнса пăсăлас мар тесен питĕ сивĕ çанталăкра кирлĕ-кирлĕ маршăн урама тухма кирлĕ мар. Ачасене, килти выльăха та сивве кăларасран лайăхрах.

Шăнса пăсăласси ытларах чухне тăвăр тата нӳрĕ атă-пушмак, çи-пуç тăхăннипе, эрех ĕçнипе, хавшанипе е ывăннипе çыхăннă. Урара çăм чăлха пулсан лайăх. Ăшă тытакан алсиш тăхăнма, шарф çыхма ан манăр. Пуçа та шăнтма кирлĕ мар.

Ытлашши шăнса кайсан медицина пулăшăвĕ кирлĕ пулать. Пĕрремĕш пулăшу пама та пĕлмелле. Ытлашши шăнса кайман пулсан вара чи малтанах шăннă вырăна ăшăтас пулать. Ăшăтнă май тата ӳте хĕреличчен массаж туса юн çаврăнăшне йĕркене кĕртмелле. Ăшă чей, сĕт, шӳрпе ĕçес пулать. Шăннă çынна ăшă çĕре вырнаçтармалла.

Граждансене çавна та асăрхаттарасшăн. Ытлашши нумай электрические приборĕсемпе усă курма ан тăрăшăр. Перегрузка пулма пултарать. Электроприборсем, кăмакасем тата мăрьесем юсавлă пулччăр.

Кирек епле чрезвычайлă лару-тăру пирки те районти пĕрлехи дежурнăй диспетчер службине 62-7-34 телефонпа (кĕсье телефонĕпе – 112 номерпе) шăнкăравласа пĕлтерме пултаратăр.

**В. ШАПОШНИКОВ калаçнă.**

# Кашмаш каччи 45 çул тултарнă пулĕччĕ



## Унăн ячĕ ĕмĕрех асра

Январĕн 30-мĕшĕнче тури чăвашсен районти музейĕнче Раççей Федерацийĕн пĕрремĕш Геройне, Кашмаш ялĕнче çуралнă Николай Валерьевич Смирнова халалланă асăну кунĕ иртрĕ. Çакăнта унăн амăшĕ, çывăх çыннисем, район администрацийĕн пуçлăхĕ Р.Н. Тимофеев, архив ĕçĕн тата культура пайĕн ертӳçи А.Е. Андреева, Раççей Геройĕ Е.Г. Борисов, ытти хăнасем хутшăнчĕç. Анчах, шел пулин те, Николай паян пирĕн хушăмăрта çук, аякри тăрăхри çапăçура ĕмĕрлĕхех куçне хупнă. Пурăннă пулсан вара чăвашăн мухтавлă ывăлĕ хĕрĕх пилĕк çул тултарнă пулĕччĕ те...

Музея пухăннисем «Гордимся славою героя» электронлă презентаципе паллашма пултарчĕç. Пурин сăн-питĕнче те хурлăх, пăлхану палăрчĕ. Кун пек самантра уйрăмах кун-çул парнеленĕ амăшне йывăр. Коля паян çумра пулнă пулсан Тамара Леонидовна ĕçпе пиçĕхнĕ аллипе ывăлне ăшшăн çупăрлĕччĕ, юнашар ларса чунне уçса шăкăл-шăкăл калаçĕччĕ, вĕри кукăльпе сăйлĕччĕ те...

– Николай Валерьевичăн ырă сăнарне, паттăрлăхне нихăçан та асăмран кăлармăпăр. Текех хăрушă вăрçă пирĕн кун-çула ан хуçтăрччĕ. Паттăрлăха вара мирлĕ пурнăçра, ĕçре, вĕренӳре кăтартасчĕ, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев Тамара Леонидовна умĕнче пуç тайса чечек çыххи тыттарнă май.

Паян Николай Валерьевич кун-çулĕ, паттăрлăхĕ пирки аса илтĕмĕр. Тĕрĕссипе вара ăна эпир яланах асра тытатпăр, малашне те çаплах пулĕ.

– Коля выляни, калаçни, сĕтел хушшинче ларни паян та ман куç умĕнче. Вăл мĕн пĕчĕкренех питĕ правурччĕ. Вылянă чухне суранланни те пĕрре мар пулнă, вăл вара пурпĕр куççулĕ кăлармастчĕ, çирĕп чунлă ачаччĕ. Чĕр чунсене питĕ юрататчĕ тата хĕрхенетчĕ, вĕсемшĕн тăрăшатчĕ. Ĕçрен пăрăнмастчĕ, тăтăшах мĕнпе те пулин пулăшатчĕ, – аса илчĕ Тамара Леонидовна ывăлĕ пирки.

Вăхăт çитсен ытти яш пекех вăл çар ретне тăрать. Тепĕр çултан шăпа ăна Афганистан тăрăхне илсе çитерет. Кунта ăна отделени командирĕ пулма шанаççĕ. Амăшĕ патне: «Анне маншăн ан кулян, эпĕ Афган çĕрĕ çинче», – тесе çыру йĕркисем шăрçалать. Çар ĕçĕнче тӳрĕ кăмăлпа, паттăрлăхпа палăрать. Çакна хисеп паллисем, Тав хучĕсем çирĕплетеççĕ. Хăй тивĕçне пурнăçланă хыççăн тăван тăрăха таврăнать. Анчах та вăл 1994 çулта çар ĕçне контракт мелĕпе тăсассине пĕлтерет. Çывăх çынсене кун пек хыпар шартах сиктерет. Вăрăм çула тухиччен, тăван кил-йышран уйрăличчен вара Коля: «Мама, если погибну – героем погибну. Да нет, пошутил я», – тесе сыв пуллашать. Чăваш çĕрĕнчен уйрăлса Таджикистана çитет. Август уйăхĕнче хĕрӳ çапăçу пулса иртет. Вĕсем çине Таджикистанри ислам юхăмĕн боевикĕсем, афган моджахечĕсем, араб наемникĕсем сĕмсĕррĕн тапăнаççĕ. 12 сехет пынă çапăçура кĕçĕн сержант Смирнов хăйне шеллемесĕр тăшмана хирĕç хăюллăн кĕрешет, вилмеллех аманать. Çапăçу хирĕнче выртакан 27 çулхи пограничник-десантник куçне ĕмĕрлĕхех хупнă пулин те тăшмана хăрушшăн туйăннă.

РФ Президенчĕн 1994 çулхи Указĕпе килĕшӳллĕн Николай Валерьевич Смирнов кĕçĕн сержанта çапăçура хăюлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Раççей Федерацийĕн Геройĕ ят параççĕ. «Ылтăн çăлтăра» вара амăшĕ чи паха тупра вырăнне хурса упрать.

Асăну кунĕ çавăн пекех Кашмаш шкулĕнче те иртрĕ. Кунти чылай ĕç-хĕл Н.В. Смирнов пурнăçне сăнлать. Апла пулсан паянхи яш-кĕрĕмĕн ăша хывмалли сахал мар.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА.**

## РФ Президенчĕн суйлавĕ умĕн

# Çиччĕ виç те пĕрре кас

Çĕнĕ çул уявне паллă турăмăр кăна, çулталăкăн пĕрремĕш уйăхĕ хыçа юлчĕ те ĕнтĕ. Хăвăрт иртет вăхăт...

Пуçра тĕрлĕрен шухăш çуралать. Ача чухне хăвăртрах çитĕнес, пурнăç çулĕ çине тухас килетчĕ. Çитĕнсен тухтăр пулма ĕмĕтленеттĕм. Анчах та пурнăçра пур ĕмĕт те пурнăçланмасть çав.

Ял хуçалăх институтĕнче вĕреннĕ чухнех мана коммунистсен ретне илчĕç. Ун чухне коммунист пур енчен те тĕслĕхлĕ çын шутланнă. Эпĕ лайăх вĕренеттĕм. Çавăнпа та мана вĕрентекенсем çине-çинех партие кĕмелли çинчен аса илтерсех тăратчĕç. Çапах та ун чухнех партие кĕнĕ çынсенчен ытларахăшĕ влаç органĕсем çывăхнерех «вырнаçма» тăрăшни курăнатчĕ. Карьеристсем тетчĕç вĕсене.

Халĕ те пирĕн çĕр-шывра влаç органĕсенче ĕçлекенсем «çемçерех пукан» çине вырнаçас тесен вăл е ку парти юхăмне пĕр тăхтаса тăмасăрах улăштарма пултараççĕ.

Акă Раççей Президенчĕ пулма ĕмĕтленекен Сергей Мироновах илер. Тем пайлайман вăл влаçра чухне. Халĕ çак чăнлăх шыракан Раççей Президенчĕ пуласшăн, халăха пăтрататать.

Президент суйлавĕччен вăхăт нумаях юлмасть. Çынсем суйлава мĕнле хутшăнасси, тĕрĕс пĕтĕмлетӳ туса тĕрĕс сасăласси камран килет-ши? Эпĕ шухăшланă тăрăх пирĕн çĕр-шывăмăр, Чăваш Енĕ, Муркаш районĕ малашне мĕнле аталанасси пирĕнтен кашнинченех тата пуринчен килет. Конституципе килĕшӳллĕн 18 çул тултарнă тата ăс-тăн енчен йĕркеллĕ кашни çыннăн тĕп тивĕçĕ – суйлава хутшăнасси, Раççей малашне те тĕрĕс çулпа тăнăç аталанса пытăр тесе тĕрĕс пĕтĕмлетӳ туса сасăласси.

Юлашки 20 çул хушшинче чăнах та пирĕн тĕрлĕрен чăнлăхпа ултав витĕр те тухма тӳр килчĕ. Эпир, колхозра ĕçлекенсем, çуршар çул ĕç укçи илменни те пулнă. Анчах та пĕри те ĕç пăрахман, хамăр çине шансах ĕçленĕ, колхоз панă тырă-пулăранах çăкăрне те пĕçернĕ, выльăхчĕрлĕх усраса аш-какайне те сутнă, укçа-тенкĕ тунă. Ачасене те çаплах тумлантарнă, çитернĕ, вĕрентнĕ. Малашне ырă еннелле улшăнусем пуласса шаннă, ĕненнĕ.

Халĕ мĕн патне çитсе тухрăмăр-ха. Пурнăç япăх тесе çухрашсах хăшĕ-пĕри чаплă пурнăçпа çеç пурăнасшăн. Уйрăмах ялсенчи яш-кĕрĕм пирки каламалла çакна. Килĕрен тенĕ пек 1-шер гектар çĕр лаптăкĕсем те уйăрса пачĕç. Ĕçле, ан ӳркен кăна.

Пур вĕт-ха пирĕн районтах маттур фермерсем, чăнчăн çĕр ĕçченĕсем. Хăш-пĕр ял хуçалăх кооперативĕсем те аталану çулĕпех утаççĕ. Мухтанмалла та савăнмалла пек ĕнтĕ. Çапах та куç умĕнче ырлăх-пурлăх, çăмăллăх мĕн чухлĕ ытларах, çавăн чухлĕ халăх шухăш-кăмăлне ăнланма йывăртарах. Савăнмалла пек ĕнтĕ юлашки вăхăтра пĕрле тунă çитĕнӳсемшĕн, йĕркеллĕ-илемлĕ урамсемшĕн, пысăк та капмар çуртсемшĕн...

Нумаях пулмасть Чăваш наци радиовĕпе паллă экономист Лев Кураков калаçнине савăнсах итлерĕм. Роза Деменцова «Тăван халăх ăсхакăлĕ» передачăна кашни çынна килĕшмелле, питĕ интереслĕ ертсе пычĕ. Ăслă та усăллă калаçу пулса иртрĕ радио итлекенсемшĕн.

Çĕнĕ çул умĕн тата республика культура министрĕ Роза Лизакова та çав тери тарăн тавра курăмлă, шухăшлама хистекен анлă калаçу ирттернĕччĕ. Вăл чăн чăвашла çав тери илемлĕ те ăслă калаçни, паллах, культура ĕçченĕсене кăна мар, пурне те килĕшрех ĕнтĕ. Анчах та халăхра тапса тăракан чăн-чăн культура çăл куçĕ мĕнле аталанса пырасси паянхи чаплă клубсемпе тĕслĕх библиотекăсенчен çеç мар, вĕсенче вăй хуракан культура ĕçченĕсенчен те килет вĕт-ха.

Пысăк сывлăх керменĕсене çӳреме те вăхăт çитмест ытларахăшĕн. Ачасене, çамрăксене физкультурăпа, спортпа туслашма пулăшас пулать. Аслисен вара яланах ырă тĕслĕх кăтартмалла.

Пĕчĕк çитменлĕхсенченех пысăкрах çитменлĕхсем пулса каяççĕ. Çынсем пĕрпĕринпе ытларах ырри çинчен мар, çитменлĕхсем çинчен калаçса «киленеççĕ».

Пуриншĕн те паянхи чи пĕлтерĕшлĕ ыйту вара вăл – мартăн 4-мĕшĕнче суйлава кайса чи тивĕçлĕ президента суйласси. Малашне эпир мĕнле пурнăçпа, мĕнле çĕршывра пурăнасси пирĕнтен кашнинченех килет. Тĕрĕс шухăшласа, чун-чĕре хушнă пек пĕртен-пĕр тĕрĕс утăм тăвас пулать çав кун.

Эпĕ, 5 ача амăшĕ, хамăн ачасен, мăнуксен пуласлăхĕшĕн шухăшласа унччен хăйне ĕçре кăтартнă кандидатшăн çеç сасăлатăп. Вăл йĕркеллĕ, ăслă-тăнлă политик, çĕр-шыва малалла аталантарассишĕн, халăхăн пурнăç шайне лайăхлатассишĕн ырмиканми тăрăшнине пурте курса тăратпăр. Пире нимĕнле çĕнĕ революци те кирлĕ мар. Çĕнĕлле шухăшлама вĕренмелле. Чи кирли вара – ĕçлеме ӳркенмелле мар, туслă, пĕр-пĕрне хисеплесе, Турă хушнă пек пурăнас пулать.

**Е. НИКИТИНА,**
**Пĕтĕм Раççейри куç курманнисен обществин районти организацийĕн секретарĕ.**

## Çул-йĕр çинче тимлĕх кирлĕ

# Çуран çынна çапса хăварнă та...

Етĕрне районĕнчи Вăрманкас Асламас ялĕнче пурăнакан Н. Васильев юсавсăр «М67 – 36» маркăллă мотоциклпа çула тухнă. Çамрăк çыннăн вара çакăн йышши транспорт хатĕрĕпе çӳреме ирĕк пулман. Апла пулин те тормоз системи ĕçлемен тата ытти кăлтăклă транспортпа Николай «Чемеево–Сура» маршрутпа çула тухнă. Октябрь уйăхĕнче каçхи тăхăр сехетсенче вара хирĕç утакан çынна уйăрма та питĕ йывăр. Çавра çил шухăшлă яш урамра ытла тĕттĕм пулнине шута илмесĕр пысăк хăвăртлăхпа çул тăрăх ыткăннă. Анчах та ытла аякка кайма ĕлкĕреймест, çул айккинелле пăрăнать, çуран утакан çынна çапса хăварать.

Хăй пысăк йăнăш тунине шута илмесĕр Николай инкек кӳнĕ çын патĕнче чарăнмасть, ăна пĕрремĕш пулăшу кӳмест, çак вырăна авари палли лартмасть, «Васкавлă пулăшу» службине пĕлтермест. Ответлăха туйманнипе авари вырăнĕнчен тарса çухалать. Çакă вара, пĕтĕмĕшле илсен, саккуна сĕмсĕррĕн пăсни пулать, малашнехи ĕç-хĕле самай йывăрлатать. Пысăк хăвăртлăхпа килекен транспорт пырса çапнипе çул хĕррипе пыракан çыннăн кĕлеткин чылай пайĕ йывăр суранланать, сывлăхĕ пысăк хăрушлăха лекет. Преступлени йĕрне çухатас тĕлĕшпе Николай мотоцикл прицепне вĕçертсе тепĕр çĕре пытарать. Апла пулин те йĕрке хуралçисем çакна çийĕнчех тупса палăртаççĕ. Çавăн пекех мотоцикл çинчи ванчăксем тата хĕрарăм çи пуçĕ çинчи хăшпĕр микропайсем, ытти фактсем Николай айăплине çирĕплетеççĕ.

Инкек тӳснĕ хĕрарăм вара çапла пĕлтерет. «Шупашкар – Мускав» маршрутлă автобус çинчен аннăскер Чемей ялне килет. Каç сĕмĕнче унăн çул хĕррипе утма тивет. Ăна-кăна шутламан хĕрарăма сасартăк пысăк хăвăртлăхпа килекен мотоцикл фари çутатать, габарит çутисем вара çунмаççĕ. Ăнсăртран ума тухнă транспорта асăрхама тата аякка пăрăнма ĕлкĕреймест хĕрарăм. Водитель çуран утакан çын мĕлкине асăрхама пултарнă пулин те икĕ-виçĕ метр юлсан мотоцикла çуран утакан çын çине тытать...

Çапах та тем вăхăт нушаланнă хыççăн инкек тӳсекен хăйĕн çывăхĕнче автомашина чарăннине сисет тата ума килекен арçын мĕлкине туять. Хăй йĕри-тавра арăш-пирĕш сапаланса выртакан япаласем вара каллех ăна пулни-иртнине аса илтереççĕ. Анчах та ăна йывăр сурансем вырăнтан хускалма, ĕç-пуç пирки тĕпĕ-йĕрĕпе ăнлантарма чăрмантараççĕ. Юрать-ха аманнă çынна пулăшма кăмăл тунă арçын тӳрех «Васкавлă пулăшу» службине шăнкăравлать...

Çамрăк арçын хăй айăпне пачах та йышăнманни, йĕрке хуралçисенчен тарни, преступлени йĕрне пытарни следстви ĕçĕнче пысăк чăрмав кӳрет. Çапах та район прокуратурин тата следстви пайĕн ĕçченĕсем тивĕçлĕ тĕпчев тунипе ултав çиеле тухать. Çак çын айăпне туллин палăртма Мускаври эксперт учрежденийĕсенче те экспертиза ĕçĕсем ирттернĕ.

Çапла вара Н. Васильев РФ УК 264 статьян 1 пайĕнчи тата 125 статьяпа пăхнă преступлени тунине следстви пайĕн ĕçченĕ Е.В. Круглова çирĕплетнĕ, айăплав пĕтĕмлетĕвĕ тăратнă. Уголовлă ĕçе район прокуратурине çирĕплетме ярса панă. Айăплава судра патшалăх айăплавçи Ю.М. Семенов çирĕплетнĕ.

Çавна май район сучĕ Н. Васильева пĕр çулталăк та ултă уйăх колони-поселенинче ирттермелле тата пĕр çулталăк транспорт хатĕрĕпе çӳреме хирĕçлекен йышăну кăларчĕ. Вăл ватă аслашшĕне тата çул çитмен йăмăкне пăхса пурăннине шута илсе вĕсене тепĕр тăванĕн хӳтлĕхне пама çирĕплетрĕ. Çавăн пекех аварире инкек тӳснĕ çынна мораль тĕлĕшĕнчен саплаштарма, унăн представительне тӳлеме, сиплев курсĕ ирттернине шута илсе сывлăха сыхлакан учреждени умĕнчи тăкакне татма йышăнчĕ.

**Р. АЛЕКСАНДРОВА.**

## Районта

# «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ята тивĕçнĕ

***ЧР Министрсен Кабинечĕ 2012 çулхи январĕн 19-мĕшĕнче 24-р № хушу кăларнă. Унпа килĕшӳллĕн республикăри граждансен тепĕр ушкăнне «Чăваш Республикин ĕç ветеранĕ» ят панине çирĕплетнĕ. Вăл шутран пирĕн районтан:***

**– Васильева Н.В. (Муркаш);**
**– Димитриева Н.Е. (Çурлатри);**
**– Димитриева Г.Т. (Карманкасси);**
**– Димитриева М.А. (Сыпай);**
**– Еремеева Т.А. (Хорнуй);**
**– Ермолаева В.В. (Нискасси);**
**– Ермолаева М.М. (Муркаш);**
**– Ефимова З.И. (Хорнуй);**
**– Замятина В.В. (Ярак);**
**– Иванова Е.П. (Шурча);**
**– Иванова Т.К. (Мăн Токшик);**
**– Илларионова А.Н. (Вăрманкасси);**
**– Ильин Н.Е. (Чуманкасси);**
**– Казамбаева В.И. (Çурлатри);**
**– Когуркина Л.К. (Муркаш);**
**– Кожевникова З.П. (Калмăккасси);**
**– Кожевникова Т.Р. (Муркаш);**
**– Колбасова З.П. (Сентимĕр);**
**– Конузин И.Г. (Çатракасси);**
**– Кочнова Л.П. (Муркаш);**
**– Логинов Ю.Г. (Çатракасси);**
**– Мефодьева З.А. (Çĕмĕрткасси);**
**– Михайлова З.Т. (Кăпас);**
**– Морозова Е.Г. (Тренккă);**
**– Мясников М.В. (Шаптак);**
**– Николаева В.Н. (Çĕмĕрткасси);**
**– Николаева Г.Г. (Муркаш);**
**– Петрова В.М. (Юнкă);**
**– Петрова В.А. (Вăрманкасси);**
**– Пугачева Н.А. (Çурлатри);**
**– Серафимова З.В. (Шетмĕпуç);**
**– Смирнова А.А. (Шуркасси);**
**– Соколова З.Ф. (Çĕньял Муркаш);**
**– Сорокин А.С. (Анатри Тăмлай);**
**– Спаскина Г.А. (Çурлатри);**
**– Суворова Н.С. (Малиновка);**
**– Тимофеева Ф.М. (Катăкуй);**
**– Толстов Ю.А. (Анаткасси);**
**– Федорова А.Р. (Хуракасси выççăлкки);**
**– Федорова Г.А. (Шаптак);**
**– Цветкова Е.И. (Юнкă);**
**– Щугулева М.Д. (Шаптак);**
**– Яковлева Е.В. (Патаккасси);**
**– Ястребова Л.В. (Юнкă);**
**– Яшкова Г.А. (Сыпай).**

Рак чирĕсене хирĕç кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун

# Маммографи пурнăçа сыхласа хăварма пултарать

Ку чăннипех те çапла. Мĕншĕн тесен маммографи тĕрĕслевне иртterни сĕт парĕсенчи кирек мĕнле улшăнусене те малтанхи тапхăрта тупса палăртма май парать. Çапла вара рак чирĕпе вилессине пĕтĕмĕшле 25–30 процент чухлĕ чакарма пулать. 40 çултан иртнĕ кашни хĕрарăмăн çак тĕрĕслеве çулсерен иртtermелле. Сĕт парĕн ракĕ аталанас хăрушлăх пур пулсан вара ку процедурăна маларах иртterни те вырăнлă.

Маммографирен хăрама кирлĕ мар. Çак тĕрĕслев хăвăрт иртет, 5–10 минутран ытла мар. Маммографи – диагноз лартма май паракан рентген мелĕ, анчах та тĕрĕслеври радиаци дози питĕ пĕчĕк.

Маммографи тĕрĕслевĕ хĕрарăмшăн питĕ пĕлтерĕшлĕ. Çапах та маммограф аппарачĕпе те тепĕр чух тĕрĕслевсен 15–20 процентĕнче рентген пайăркисем шыçăсене палăртмасан та пултараççĕ. Çакăн пек чухне вара УЗИ пулăшать.

Маммографи тĕрĕслевне менструаци циклĕн 5–14-мĕш кунĕсенче иртtermелле. Ытти кунсенче сĕт парĕсенче улшăнусем пулса иртеççĕ: тĕртем пысăкланать, çăралать. Çакна пула маммографи «ӳкерчĕкĕ» тĕрĕс мар пулма пултарать, апла – диагноз тĕрĕс лартасси те.

Сывлăх сыхлавне модернизацилес программăпа килĕшӳллĕн пирĕн больница та кăçал маммограф туянчĕ. Çак аппаратпа паян – Рак чирĕсене хирĕç кĕрешмелли пĕтĕм тĕнчери кун – тĕрĕслевсем иртterме пуçларăмăр.

Малашне хĕрарăмсем хăйсен сывлăхне тĕплĕнрех тĕрĕслес тĕллевпе хăйсем те пуçарулăрах пуласса шанас килет.

**Н. КОЖЕВНИКОВ,**
**районти онколог.**

# Регионти çĕнтерӳçĕсем



***Чăваш, Тутарстан, Мари Эл, Мордва республикисенчи тата Чулхулапа Ульяновск облаçĕсенчи шкул ачисем регионти «Совенок» конкурсра хăйсене тĕрлĕ номинацисенче тĕрĕсленĕ. Конкурса йĕркеленĕ аталану центрĕнчен пирĕн района та ырă хыпар çитрĕ: Чуманкассинчи вăтам шкулти 10 «б» класра вĕренекен Никита Чернов çырнă «Душа русской природы» минисочинени конкурсра чи лайăххи пулнă. Никита конкурсра пухма май пур 60 бала пĕччен кăна пухма пултарнă! Çавăнпах «ылтăн» медальпе диплома тивĕçнĕ те.***

***Унăн вĕрентекенĕ Оксана Георгиевна Федотова (сылтăмри) вырăс чĕлхипе литературине шкулта пĕрремĕш çул кăна вĕрентет-ха. Апла пулин те пултаруллă педагог теме пулать ăна. Вăл ертсе пынипех 5 класра вĕренекен Катерина Герасимова нумай пулмасть республика шайĕнчи сочиненисен конкурсĕнче пĕрремĕш вырăн çĕнсе илме пултарнă. Çӳлерех асăннă регион конкурсĕнче юмаха сăнласа паракан ӳкерчĕкпе виççĕмĕш вырăна тухнă.***

***Оксана Георгиевнăна та, шкула та çĕнтерӳçĕсем хатĕрленĕшĕн грамотăсемпе тата Тав çырăвĕсемпе чысланă. Çакă татах та çитĕнӳсем тума хавхалантарать.***

**Н. НИКОЛАЕВА.**

# Ĕç пенсийĕсем ӳсрĕç

Пенси ыйтăвĕсемпе

***Раççей Федерацийĕн Правительствин 2012 çулхи январĕн 25-мĕшĕнчи 4 № йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн ватлăха, инвалида тухнине тата çемьере тăрантаракана çухатнине пула паракан ĕç пенсийĕсен виçи 7 процент ӳсрĕ. Пенси фончĕн районти управленийĕн пуçлăхĕн çумĕ Н.Г. СЕМЕНОВА ун пирки тĕплĕнрех каласа пама кăмăл турĕ.***

– Инфляцие кура ĕç пенсийĕсене çулсерен индексацилесе пыраççĕ. Раççей Экономика аталанăвĕн министерствин кăтартăвĕсемпе килĕшӳллĕн иртнĕ çул инфляци вăтамран 6,1 процентпа танлашнă. Раççей Правительстви вара пенсисене 7 процент ӳстерчĕ.

Çапла вара февралĕн 1-мĕшĕнчен тытăнса ватлăха пула паракан пенсисем республикипе вăтамран 550 тенкĕ ӳсрĕç, 8500 тенкĕпе танлашрĕç. Районĕпе ӳсĕм шайĕ вăтамран 480 тенкĕ чухлĕ пулчĕ, пенсисен вăтам виçи – 7400 тенкĕ. Ватлăха пула паракан ĕç пенсийĕсене республикипе пĕтĕм пенсионерсенчен 92 проценчĕ, районĕпе 91 проценчĕ илсе тăрать.

– Тăвата çул каялла кăна Чăваш Енре ĕç пенсийĕсен вăтам виçи 3700 тенкĕпе танлашатчĕ. Çак тапхăрта аслă ăру çыннисен пурнăç шайне ӳстерессипе чылай ĕç туса ирттернĕ. Ку вăл чи малтанах ĕç пенсийĕсене валоризацилени тата экономика аталанăвне кура çуллен ӳстерсе пыни. Çак тапхăрта кăна пенси виçисем 2,5 хут ӳсрĕç, – каласа парать РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн управляющийĕ Роза Кондратьева.

Пĕтĕмĕшле илсен республикипе 316 пин пенсионерăн, районĕпе 9 пин пенсионерăн пенсийĕсем ӳсрĕç. Ӳсĕм шайĕ кашнин расна пулать, вăл халĕ илсе тăракан пенси виçинчен килет.

Пенси виçисене ӳстер-нĕ май пенси тӳлеме каякан тăкаксем кашни уйăх пуçне республикипе унчченхинчен 170 миллион тенкĕ ытларах пулаççĕ, пĕтĕмпе 2,8 миллиард тенкĕпе танлашаççĕ (районĕпе 4,3 миллион тата 71,3 миллион тенкĕ).

Тепĕр хут ĕç пенсийĕсене 2012 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнче ӳстерме палăртнă. Ун чухнех социаллă пенсисем, федераллă çăмăллăхсемпе усă куракансене уйăхсерен паракан тӳлевсем тата соцпакет виçисем те ӳсĕç.

Вăрçă ачисем

# Çăмăл пулман пирĕн çамрăклăх

Эпĕ вăрçă тухсан тепĕр уйăхран çуралнă. Мана çуратнă хыççăн тепĕр куннех анне тырă вырма тухнă. Мана, анчах çуралнă ачана, кĕлтесем хушшине сулхăн вырăна хурса хăварнă та хăй хыпалансах тырă вырнă. Вăл вăхăтра ача çуратиччен те, çуратнă хыççăн та канмалли кунсем паман.

1941–1952 çулсенче пирĕн тăрăхра сухалакан трактор та пулман, тырă вырма – комбайн та. Алăпа кунтăкпа тырă акнă, ăна çурлапа вырса илнĕ.

Мана та ачаллах тырă вырма лекнĕ: çичĕ çулта çак ĕçе кӳлĕннĕ. Вăл вăхăтра хальхи пек атă-пушмак пулман, çара уранах çӳренĕ, тырă хăмăлĕ тирнине те туйман. Тыррипулли тулăх пулсан та ĕçлекенсене питĕ сахал панă. Ăна ытларах патшалăх валли ăсатнă. Çимелли çитменрен ĕнтĕ шĕшкĕ кăчкине те, мăян пашалăвне те, çĕрĕк çĕр улмин крахмалне те, ут хӳри икерчине те тата ыттине те çиме тивнĕ. Тăватă çулта чухне урамра выляна вăхăтра выçăпа вăй пĕтсе килнине питĕ лайăх астăватăп. Вара мана анне пӳрте йăтса кĕрсе ăшă сĕт ĕçтерчĕ. Вăл вăхăтра эпир пылак сахăр мĕнне те пĕлмен.

Эпир пилĕк ача çитĕннĕ, эпĕ – кĕçĕнни. Аслă пичче Николай Лукич Яковлев 1943 çулта вăрçа тухса кайнă. (Пичче паллă художник, 87 çулта.)

Кĕркунне, хĕлле, çуркунне пире урана сырма çăпатасем кирлĕ пулнă. Ун чухне пушăтлăх çăка хунавĕ каснăшăн лесниксем пысăк штраф паратчĕç тата. Çавăнпа та эпир çĕнĕ çăпатасене пĕрремĕш тăхăнсан çырмари пылчăкпа варалаттăмăр. Çав çулсенче ялта кашни килтех икĕ сотка таран кантăр акнă. Кантăрне шыва хурса пултаратчĕç. Шывра пулăсем кантăр çурăмĕн шывĕпе анраса пĕвере çиеле тухатчĕç. Эпир вара çав пулăсене алăпах тытаттăмăр. Кантăр наркотик пулнине те пĕлмен.

Кантăр çурăмне тылласа, шăртласа, вĕтетсе сӳс тăватчĕç. Хыççăн çав сӳсе арласа тĕртсе пир тăватчĕç. Çав пиртен кĕпе-йĕм çĕлесе панă та.

Ялсенче вăл вăхăтра пурте тенĕ пекех улăм витнĕ пӳртсемччĕ. Çумăр вăйлăрах çусан шыв анатчĕ. Шăрăх çанталăкра час-часах пушарсем те пулатчĕç. Пушар машинисем пулман.

1961 çул хыççăн колхозниксене уйăхсерен ĕç укçи тӳлеме тытăнчĕç. Пенсионерсем уйăхне 12-шер тенкĕ илетчĕç.

Ялсене электричество çути çитрĕ, уй-хирте трактор-комбайн ĕçлеме пуçларĕ. Ял халăхĕн пурнăçĕ лайăхланма тытăнчĕ.

Хальхи вăхăта илес пулсан пирĕн Хурăнкасси урамĕсенче асфальт сарнă çул, килсенче – газ, шыв... Район центрне каяс пулсан малтан эпир 18 çухрăм çуран утнă. Халĕ пассажирсене турттаракан транспорт пирĕн енне кунсерен вуншар рейс тăвать.

Район центрĕ те юлашки çулсенче питĕ илемлĕ. Муркаш ял тăрăхĕн пуçлăхне Николай Иванович Никитина тав сăмахĕ калас килет: çулла кунта – чечек тĕнчи, таса урамсем кăмăла хăпартаççĕ.

Вăрçă ачисем... Эпир Хурăнкассинче 13-ĕн пулнă, халĕ виççĕн кăна юлтăмăр. Пурнăç лайăх енне улшăннине курса, малтанхипе танлаштарса пырайратпăр. В.В. Путин президента ларнă вăхăтранпа çĕр-шыври ларутăру чăнах та лайăх енне улшăнса пырать. Пенси укçине вăхăтра тӳлеççĕ, бюджет сферинче ĕçлекенсен ĕç укçине ӳстерсе пыраççĕ, çамрăксене те патшалăх нумай пулăшать халĕ... Условисем çителĕклĕ – ĕçлеме ан ӳркен кăна. Çакна курса тăрса ĕнтĕ эпĕ çитес суйлава пĕр иккĕленмесĕрех Раççейĕн тăнăçлă малашлăхĕшĕн сасăлăп.

**Илья ЯКОВЛЕВ.**

**ПРОТОКОЛ ЖЕРЕБЬЕВКИ**
**по определению даты размещения на бесплатной основе предвыборных агитационных материалов зарегистрированных кандидатов по выборам в местные органы самоуправления 4 марта 2012 года на страницах Моргаушской районной газеты «Çĕнтерӳ ялавĕ»**

| № п/п | Фамилия, имя, отчество зарегистрированного кандидата | Даты размещения предвыборных агитационных материалов, полоса и место на полосе | Площади, выделяемые для агитационных материалов |
|---|---|---|---|
| Кадикасинский одномандатный избирательный округ №9 | | | |
| 1. | Иванов Юрий Александрович | 18 января 2012 года, 2 полоса, место 1 | 312 кв.см |
| 2. | Мочалов Эдуард Валерьевич | 18 января 2012 года, 2 полоса, место 3 | 312 кв.см |
| 3. | Ямангеев Владимир Владиславович | 18 января 2012 года, 3 полоса, место 2 | 312 кв.см |
| 4. | Сергеева Любовь Петровна | 18 января 2012 года, 2 полоса, место 2 | 312 кв.см |
| 5. | Крючков Василий Александрович | 18 января 2012 года, 3 полоса, место 1 | 312 кв.см |

**Жеребьевка проведена 30 января 2012 года.**

Спортри çитĕнӳсем

# «Хăравçă хоккейла вылямасть»

Республикăра «Ылтăн шайба» клуб парнисене тата республика пуçлăхĕн кубокне çĕнсе илессишĕн хоккей турнирĕсем иртеççĕ.

Вăтам ушкăнри хоккеистсен командисем вăйăсене вĕçленĕ ĕнтĕ. Унта Муркаш районĕн команди виççĕмĕш вырăна тухнă.

Кĕçĕн ушкăнрисем хальлĕхе малти вырăнсене пайлама ĕлкĕреймен-ха. Январĕн 31-мĕшĕнче Муркашри çамрăк хоккеистсем Элĕксен командине 7:0 шутпа çĕнтернĕ, Шупашкарти «Спартакăн» хапхисене пилĕк гол кĕртме пултарнă (5:1). Çитес вăхăтра пирĕн районти çамрăк хоккеистсем Патăрьелсемпе тĕл пулĕç, 1 тата 2-мĕш вырăнсемшĕн кĕрешĕç. Ăнăçусем – вĕсене!

**Хамăр инф.**

Ял тăрăхĕсенче

# Иртнĕ çул итогĕсене тишкернĕ

***Çак кунсенче Юнкă ял тăрăхĕнче анлă канашлу иртнĕ. Унта депутатсен Юнкă ял тăрăхĕнчи Пухăвĕн депутачĕсем, территорири учреждениsemпе организацисен ертӳçисем, ял старостисем, обществăлла организацисен ертӳçисем, ял тăрăхĕн активĕ хутшăннă. Канашлу ĕçне çавăн пекех «МСО «Моргаушская» акционерсен хупă обществин генеральнăй директорĕ, депутатсен районти Пухăвĕн депутачĕ В.Н. Семенов, республика представителĕ В.П. Димитриев, район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л.Ю. Тарасова хутшăнма кăмăл тунă.***

Юнкă ял тăрăхĕн пуçлăхĕ В.В. Фомин 2011 çулта туса иртtернĕ ĕççем пирки отчет туса панă, иртнĕ çулхи бюджета мĕнле пурнăçлани тата кăçалхи бюджет ыйтăвĕсем çинче чарăнса тăнă. Çавăн пекех депутатсене, старостăсене территорисене тирпей-илем кĕртес ĕçе активлă хутшăннăшăн тав сăмахĕ каланă.

Полицин участокри уполномоченнăйĕ Н.Е. Кудряшов хăйĕн отчетĕнче территорире преступленисем тăвассин шайĕ пысăк пулнине палăртнă. Юнкăпуç ялĕ патĕнче вырнаçнă «АлАн» кафепе çыхăннă преступленисем кăна 4 пулнă. Пур преступленисене те уçса панă.

Йĕркеллĕ мар çемьесене учета илнĕ. Çемьере харкашу пуçаракансем улттăн шутланаççĕ. Преступленисем тăвас енне сулăннă çул çитмен çамрăксем иккĕн тата условлă майпа ирĕкрен хăтарнисем иккĕн.

Участковăй иртнĕ çул 207 протокол çырнă. Ытларахăшĕ вĕсем тирпей-илем, хăтлăх тĕлĕшпе йĕркене пăхăнманнипе, йытăсене кăкарса усраманнипе çыхăннă.

Район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Л.Ю. Тарасова районăн экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕн кăтартăвĕсемпе паллаштарнă, РФ Президенчĕн суйлавне хатĕрленсе иртtерес ĕççем епле пыни пирки чарăнса тăнă. Суйлавçăсене активлă пулма, мартăн 4-мĕшĕнче пурне те сасăлава хутшăнма чĕннĕ.

Республика представителĕ В.П. Димитриев хăйĕн сăмахĕнче ял çыннисене, нумай ачаллă çемьесене, фермерсене патшалăх енчен паракан пулăшу мелĕсене палăртнă. Учительсен, культура ĕçченĕсен, бюджет сферин ĕçченĕсен ĕç укçине юлашки вăхăтра самай ӳстерме май килни пирки чарăннă. Çитес суйлав итогĕсенчен чылай енчен хамарăн малашлăх мĕнле пуласси тӳрремĕнех килнине те уçăмлатнă вăл.

«МСО «Моргаушская» акционерсен хупă обществин генеральнăй директорĕ В.Н. Семенов та суйлавçăсене активлăрах пулма, суйлава хутшăнма, тĕрĕс пĕтĕмлетӳ туса сасăлама чĕнсе каланă.

**В. ШАПОШНИКОВ.**

# Телепрограмма

с 6 по 12 февраля 2012 года

## ПОНЕДЕЛЬНИК, 06.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 0.35, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!»
10.50 «Право на защиту»
12.20 Модный приговор
13.25 Понять. Простить
14.00 Другие новости
14.20, 4.10 «Хочу знать»
15.20 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.05 «Свобода и справедливость»
18.15 Выборы - 2012
18.50 «Давай поженимся!»
19.55 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЖУКОВ»
22.30 «Закрытые за рубежом»
23.35 «Познер»
0.55 «Белый воротничок»
2.05, 3.05 Х/ф «ПУТЬ В ТЫСЯЧУ МИЛЬ»

### РТР

5.00 Утро России
9.05 «С новым домом!»
10.00 «О самом главном»
11.00, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
11.50 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
13.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50 Вести. Дежурная часть
15.05 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
16.50 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «ХОЗЯЙКА МОЕЙ СУДЬБЫ»
18.50 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «20 ЛЕТ БЕЗ ЛЮБВИ»
22.50 Т/с «БАЙКИ МИТЯЯ»
23.55 Свидетели. «Они были первыми. Валентин Зорин»
0.50 Вести +
1.10 «Профилактика»
2.20 Т/с «ЧАК-2»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
16.30-16.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия

**На канале «Россия-2»**

9.15-9.20 Вести-Спорт-Чувашия

### КУЛЬТУРА

7.00 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.05 Х/ф «ХОЛОДНЫЙ ДОМ»
12.00, 0.45 Д/ф «Песни по дороге сквозь время. Венский хор мальчиков»
12.55 «Линия жизни»
13.45 Д/с «История произведений искусства»
14.15 Г. Запольская. Телеспектакль «МОРАЛЬ ПАНИ ДУЛЬСКОЙ»
15.40, 19.30, 23.45 Новости культуры
15.50 М/с «Орсон и Оливия»
16.15 М/ф «Дядя Миша»
16.25 Т/с «ЗАГАДОЧНЫЕ ИСТОРИИ ЭНИД БЛАЙТОН»
16.50, 1.40 Д/с «Обезьяны-воришки»
17.15, 2.25 Д/ф «Гвардейский корпус»
17.45 «Великие инструментальные концерты Бетховена». Концерт №4 для фортепиано с оркестром
18.35 Д/с «Тайны прошлого»
19.45 Главная роль
20.05 «Сати. Нескучная классика...»
20.45 «Полиглот»
21.30 Д/ф «Двойной портрет в интерьере эпохи. Зощенко и Олеша»
22.30 «Тем временем»
23.15 Д/ф «Завтра не умрет никогда». Д/ф . «На страже Земли»
0.05 Д/ф «90-е: Черная дыра, или Шаг в будущее?»
2.10 Д/ф «Мировые сокровища культуры». «Старый город Граца. Здесь царит такое умиротворение»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 Обзор. Чрезвычайное происшествие. Обзор за неделю
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.25 Т/с «СУПРУГИ»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «ППС»
21.25 Х/ф «КОДЕКС ЧЕСТИ-5»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 Честный понедельник
0.25 «Школа злословия»
1.10 Главная дорога
1.45 Центр помощи «Анастасия»
2.35 «В зоне особого риска»
3.10 Т/с «МОЛОДЫЕ И ЗЛЫЕ»
5.05 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА»

## ВТОРНИК, 07.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.35, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!»
10.50 «Право на защиту»
12.20 Модный приговор
13.25 Понять. Простить
14.00 Другие новости
14.20 «Хочу знать»
15.20 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.05 «Свобода и справедливость»
18.15 Выборы - 2012
18.50 «Давай поженимся!»
19.55 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЖУКОВ»
22.30 «Холод. В поисках бессмертия»
0.00 «Городские пижоны». «Следствие по телу»
0.50 Х/ф «МЕЧТА ПО-ИТАЛЬЯНСКИ»
2.50, 3.05 Х/ф «ПРЕСТУПНИК»

### РТР

5.00 Утро России
9.05 «С новым домом!»
10.00 «О самом главном»
11.00, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
11.50 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
13.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50 Вести. Дежурная часть
15.05 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
16.50 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «ХОЗЯЙКА МОЕЙ СУДЬБЫ»
18.55 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «20 ЛЕТ БЕЗ ЛЮБВИ»
22.55 Т/с «БАЙКИ МИТЯЯ»
0.00 Свидетели. «Они были первыми. Валентин Зорин»
1.00 Вести +
1.20 «Профилактика»
2.30 «Честный детектив»
3.10 Т/с «ЧАК-2»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
9.05 В центре внимания. Промышленность
9.33-10.00 Телеюрă
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
16.30-16.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.05 Х/ф «ХОЛОДНЫЙ ДОМ»
12.00 «Полиглот»
12.45, 18.35 Д/с «Тайны прошлого»
13.40 «Мой Эрмитаж»
14.10, 2.50 Д/ф «Данте Алигьери»
14.15 Г. Запольская. Телеспектакль «МОРАЛЬ ПАНИ ДУЛЬСКОЙ»
15.40, 19.30, 23.45 Новости культуры
15.50 М/с «Орсон и Оливия»
16.15 М/ф «Петух и боярин»
16.25 Т/с «ЗАГАДОЧНЫЕ ИСТОРИИ ЭНИД БЛАЙТОН»
16.50, 1.55 Д/с «Обезьяны-воришки»
17.15, 2.25 Д/ф «Гвардейский корпус»
17.45 «Великие инструментальные концерты Бетховена». Концерт № 5 для фортепиано с оркестром «Император»
19.45 Главная роль
20.05 Власть факта. «Когда умрут газеты?»
20.45 «Полиглот»
21.30 Д/ф «Двойной портрет в интерьере эпохи. Эйзенштейн и Мейерхольд»
22.30 «Игра в бисер»
23.15 Д/ф «Завтра не умрет никогда»
0.10 Х/ф «ВЕСЕЛЫЕ РЕБЯТА»
1.40 Р. Щедрин. Сюита из оперы «Не только любовь»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ»
9.30, 15.30, 18.30 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Внимание, розыск!»
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.25 Т/с «СУПРУГИ»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «ППС»
21.25 Х/ф «КОДЕКС ЧЕСТИ-5»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 «Крутые нулевые»
0.30 Т/с «ДЕТЕКТИВ РАШ»
1.30 Квартирный вопрос
2.35 «В зоне особого риска»
3.10 Т/с «МОЛОДЫЕ И ЗЛЫЕ»
5.05 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА»

## СРЕДА, 08.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.35, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!»
10.50 «Право на защиту»
12.20 Модный приговор
13.25 Понять. Простить
14.00 Другие новости
14.20, 4.25 «Хочу знать»
15.20 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.05 «Свобода и справедливость»
18.50 «Давай поженимся!»
19.55 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЖУКОВ»
22.30 Среда обитания. «Паленый» товар»
0.00 «Городские пижоны». «Убийство»
2.20, 3.05 Х/ф «ИСЧЕЗНУВШАЯ БАННИ ЛЕЙК»

### РТР

5.00 Утро России
9.05 «С новым домом!»
10.00 «О самом главном»
11.00, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
11.50 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
13.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50 Вести. Дежурная часть
15.05 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
16.50 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «ХОЗЯЙКА МОЕЙ СУДЬБЫ»
18.50 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «20 ЛЕТ БЕЗ ЛЮБВИ»
22.55 Т/с «БАЙКИ МИТЯЯ»
0.00 «Нинель Мышкова. До и после «Гадюки»
1.00 Вести +
1.20 «Профилактика»
2.25 Горячая десятка
3.35 Т/с «ЧАК-2»
4.30 «Городок»

### ЧУВАШИЯ

6.07-6.10, 6.35-6.41 Вести-Чăваш ен
7.07-7.10, 7.35-7.41 Утро Чувашии
8.07-8.10, 8.35-8.41 Утро Чувашии
11.30-11.50 Вести-Чăваш ен
14.30-14.50 Вести-Чувашия
16.30-16.50 Вести-Чăваш ен
20.30-20.50 Вести-Чувашия

### КУЛЬТУРА

6.30 «Евроньюс»
10.00 «Наблюдатель»
11.05 Х/ф «ХОЛОДНЫЙ ДОМ»
12.00 «Полиглот»
12.45, 18.35 Д/с «Тайны прошлого»
13.40 Красуйся, град Петров! Зодчий Альберт Кавос
14.10 Х/ф «ВЕСЕЛЫЕ РЕБЯТА»
15.40, 19.30, 23.45 Новости культуры
15.50 М/с «Орсон и Оливия»
16.15 М/ф «Лесная хроника»
16.25 Т/с «ЗАГАДОЧНЫЕ ИСТОРИИ ЭНИД БЛАЙТОН»
16.50, 1.55 Д/с «Обезьяны-воришки»
17.15, 2.25 Д/ф «Гвардейский корпус»
17.45 «Великие инструментальные концерты Бетховена». Скрипичный концерт
19.45 Главная роль
20.05 «Абсолютный слух»
20.45 «Полиглот»
21.30 Д/ф «Двойной портрет в интерьере эпохи. Эрдман и Степанова»
22.30 Магия кино
23.15 Д/ф «Завтра не умрет никогда»
0.10 Х/ф «ЦИРК»
1.40 Играет Барри Дуглас (фортепиано)
2.50 Д/ф «Томас Кук»

### НТВ

5.55 «НТВ утром»
8.30 Т/с «МОРСКИЕ ДЬЯВОЛЫ»
9.30, 15.30, 18.35 Обзор. Чрезвычайное происшествие
10.00, 13.00, 16.00, 19.00 Сегодня
10.20 «Внимание, розыск!»
10.55 «До суда»
12.00 Суд присяжных
13.25 Т/с «СУПРУГИ»
16.25 «Прокурорская проверка»
17.40 «Говорим и показываем»
19.30 Т/с «ППС»
21.25 Х/ф «КОДЕКС ЧЕСТИ-5»
23.15 Сегодня. Итоги
23.35 Х/ф «ГОНЧИЕ-4». «ПОДАРОК ДЛЯ ГЕНЕРАЛА»
1.35 Дачный ответ
2.40 «В зоне особого риска»
3.15 Т/с «МОЛОДЫЕ И ЗЛЫЕ»
5.10 Т/с «2,5 ЧЕЛОВЕКА»

## ЧЕТВЕРГ, 09.02

### ПЕРВЫЙ

5.00, 9.00, 12.00, 15.00, 18.00, 23.35, 3.00 Новости
5.05 «Доброе утро»
9.20 Контрольная закупка
9.50 «Жить здорово!»
10.50 «Право на защиту»
12.20 Модный приговор
13.25 Понять. Простить
14.00 Другие новости
14.20 «Хочу знать»
15.20 Т/с «ОБРУЧАЛЬНОЕ КОЛЬЦО»
17.05 «Свобода и справедливость»
18.50 «Давай поженимся!»
19.55 «Пусть говорят»
21.00 «Время»
21.30 Т/с «ЖУКОВ»
22.30 «Человек и закон»
0.00 «В контексте»
0.55 Х/ф «КОМНАТА СТРАХА»
3.05 Х/ф «АНГЕЛ СМЕРТИ»

### РТР

5.00 Утро России
9.05 «С новым домом!»
10.00 «О самом главном»
11.00, 14.00, 16.00, 20.00 Вести
11.50 «КУЛАГИН И ПАРТНЕРЫ»
13.00 Т/с «ТАЙНЫ СЛЕДСТВИЯ»
14.50, 4.45 Вести. Дежурная часть
15.05 Т/с «ЕФРОСИНЬЯ. ПРОДОЛЖЕНИЕ»
16.50 Т/с «КРОВИНУШКА»
17.50 Т/с «ХОЗЯЙКА МОЕЙ СУДЬБЫ»
18.55 «Прямой эфир»
20.50 Спокойной ночи, малыши!
21.00 Т/с «20 ЛЕТ БЕЗ ЛЮБВИ»
22.55 Т/с «БАЙКИ МИТЯЯ»
0.00 «Обреченные на «Оскар»
1.00 Вести +
